# П.П.ХУСАНКАЙ КĔНЕКЕ ВУЛАТЬ

*ҪЫН мĕнле кĕнекесем вуланине кура вăл мĕнле ҫын иккенне пĕлме пулать тенĕ. /Ку интеллигентсем хушшинчи сăмах/. Тата кĕнекисене вуланă май–кĕнекисем хăйĕн пулсан – унта туса хăварнă паллăсем тăрăх ҫыннăн чунне лайăхрах ăнланса илме пулать-мĕн. Ахаль пĕлме те интереслĕ: мĕн вуланă пирĕн аслă сăвăҫăмăр? Мĕнле вуланă? Мĕн тупнă унтан хăйне валли?*

Малтан «Виҫĕ кун, виҫĕ каҫ» кĕнекене вуланă чухнехи паллăсем ҫинчен.

●4-мĕш страницăра пĕр ҫĕрте автор «Чĕрене пĕҫертсе, шанчăк кĕрп! хыпса илет» тенĕ пуплевре Петр Петрович «кĕрп» тенĕ сăмаха аялтан туртса хунă. Нимĕнле комментари те ҫырман.

●Ҫав страницăрах автор «Пăр ҫĕмĕрен Атăл ҫинчи «Măкăль-шакăль пăрсене утюг пек якатса хăварнă» тенинче «măкăль-шакăль» сăмахсене аялтан туртнă. Комментари ҫук.

●Леш ҫыран хӳттинчи пулăҫсем буддăсем пек хускалми лараҫҫĕ тенинче П.П. буддăсем сăмаха, пăр ҫинчи сукмакăн икĕ енче капланса выртакан утравсене Сциллăпа Харибда пек тенисене аялтан туртса паллă тунă, анчах хăйĕн шухăшне, ҫырман пулсан та, мĕн каласшăн пулнине тавҫăрса илме май пур. Тепри автора вăта таран татса хурĕччĕ: «Эсĕ вăл сăмахсене хăв та пĕлтĕрсенче ҫеҫ ăнланакан пулнăҫке, ялти вулакансем умĕнче ют ҫĕршыв сăмахĕсемпе мухтанассу килчĕ-и?» – тейĕччĕ. Сапăр ҫын, пысăк культурăллă этем, П.П. автора систернипех ҫырлахнă.

●Малалла кĕнекери ҫакăн пек ҫырнă вырăн пур. /Кĕнекери ҫын шавлă хуларан лăпкă Йăлăма каҫнă/.

«Хăлхана хупласа хунă шăплăх майĕпен уҫăлма тытăнать, тут илет, курăнма пуҫлать. Хулари шăв-шавпа тĕркĕшӳре ывăннă нервсем лăпсăр канаҫҫĕ, чĕре чечек хĕвеле хирĕҫ сарăлнă пек сарăлать. Пĕтĕм ҫанҫурăм чӳхенет, шăплăхпа ҫăвăнса тасалать, вăй илет».

Ку абзацра Петр Петрович лăпсăр канаҫҫĕ тенĕ сăмахсене аялтан туртнă. Кĕнекен ҫӳл хĕрринче ҫакăн пек асăрхаттарни пур: «Пирĕн: лĕпсĕр».

... Тепĕр сыпăкра Америка художникĕ Рокуэлл Кент ятне аялтан туртса паллă тунă. Мĕн шухăшпа туртнине шарламан.

Малалла вулатпăр: «Аслă вăй – шăплăх. Тĕнчери чи илемлĕ япала – этем – те ун ытамĕнче ҫуралса тухса хĕвелпе танлашать, пурăнса ҫитсен, каллех аслă шăплăха куҫать.

Тĕнчере нимĕн те ĕмĕре пымасть, пĕр шăплăх ҫеҫ вĕҫĕмсĕр, чикĕсĕр...»

●Ку тĕле Петр Петрович кĕнекен пĕр айккине туртса хунă та тепĕр айккине скобка ăшне в сас палли лартнă. Вăл – ку шухăша автор вырăсларан илмен-ши? – тесшĕн пулнă пуль. Темĕн-ҫке. Тен, ун евĕрлĕ калани вырăссен те пулнă. Эпĕ те вулама юрататăп та, ун пеккисенех курман.

●Кĕнекери ҫын сăлтавсăрах епресе пыратăп тенине П.П. йĕлпĕрсе пыратăп тесе тӳрлетнĕ.

●7-мĕш страницăра «тореадор», «равновеси» сăмахсене аялтан туртнă. Чăвашла ҫырнă чухне чăвашлах шухăшла тесшĕн пулнă-тăр.

●Педтехникумри студентка пĕр йĕкĕте ятлать: «Пăх-ха эс ăна, Ромео тупăннă», тет. /9 страница/. П.П. «Ромео» ята аялтан туртнă. Шекспирсемпе интересленме иртерех-ха тенĕ-ши? Мĕнле студентка, мĕнле учительница ĕнтĕ. Тепри университет пĕтерсе те Шекспир-Шиллер кĕнекисене уҫса пăхмасăр ирттерме ăс ҫитерет.

●Пирĕн енче, Самар облаҫĕн хĕвел тухăҫĕнче, сасартăк хĕрелсе кайнине кӳ! хĕрелсе кайрĕ теҫҫĕ. Кăна эпĕ П.П. паллă тунăран ҫыртăм.

●Калав-мĕн хайланă чухне эпĕр кирлĕ мар ҫĕртенех вырăсла сăмахсем кĕрте-кĕрте яратпăр. Кунта та пур вĕсем: любопытство, лось, рысь, вывод тата ыт. те. Тĕрĕс асăрхаттарать пире П.Хусанкай.

●Кĕнекери текста айккинчен чернилпа туртса паллă туни, тен, сăвăҫ ырланине пĕлтерет? Сăмахран, 11-12 страницăсенче вăл ҫак сыпăка ҫапла палăртнă. Повеҫри Петров хĕллехи йăлăмра савăнса утса пынă май шухăша каять. «Чăнах савăнтăм-ши эпĕ?– тет вăл. – Паллах, савăнтăм. Анчах тусăма курассишĕн кăна мар ҫав, хамран хам пытарас мар ĕнтĕ. Пуринчен ытла ҫавăншăн, тĕрĕс вăл. Тата тепĕр ҫавăн чухлех вара – ҫула тухнишĕн, халиччен курман вырăнсене курма тӳр килнĕшĕн, ниҫтан та нимĕн ыратманшăн. Сывлăх пур чухне кайма та, килме те, утма та, чупма та пулать. Ыран ăҫта та пулин кайма сăлтав пуррине пĕлсе тăни те савăнтарать ҫынна. Вăл кăмăлĕ тулнипе те кулать».

●Тĕл-тĕл П.П. тӳсеймесĕр редактор ĕҫне те туса хăварать. Кĕнеке авторĕ «электричество хунарĕ» тенине вăл «электро-хунар» тесе, «гвоздика» тенине «калемпĕр» тесе, «хаҫатра калашле, вуҫех урăхла» тенине «пачах урăхла» тесе тӳрлетет.

Кĕнекен 16 страницинче пĕр хĕрарăм пирки автор ҫапла ҫырнă пулнă: «Ҫын ватăлни măйра паллă пулаканччĕ, ăна Катерина Ивановна ҫемҫе мамăк тутăрпа хупланă. Аллине чуптунă чух пăхрăм та – шĕвĕр пӳрнеллĕ сивĕ алли ҫеҫ унăн ватăлса ларнă».

Иккĕмĕш пуплевĕн юлашки пайĕ Хусанкай редакциленĕ хыҫҫăн халь ҫапла курăнать: «шĕвĕр чĕрнеллĕ сивĕ пӳрнисем ҫеҫ унăн ватăлса ларнă».

Лайăхланнă-и текст? Паллах. Лайăхланнă ҫеҫ те мар-ха, тĕрĕс сăнарланнă, интеллигентлăрах пулса тухнă. Урок ку авторшăн.

●Тата тепĕр тĕслĕх. Авторăн акă мĕнле: «Апачĕ унсăр та ҫитет-ха та. /Текста саспа вулас пулсан пуплев вĕҫĕ «хă та» тенĕ майлă илтĕнĕччĕ/. П.П. автора ҫапла тӳрлетет: «Апачĕ унсăр та ҫитет те-ха». Кăшт ҫеҫ тĕкĕннĕ ăста – пуплев мĕнле хитреленсе кайнă.

●Редактор пирки калас пулсан – ҫук вĕсем пирĕн. Чăн-чăн редакторсем, литература редакторĕсем, стиль уйрăмлăхĕсене пĕлекен ăстасем ҫук. Кама лартаҫҫĕ редактора – ҫавă редактор пулса тăрать, паллă писательсем ҫырнине «тӳрлетме» тытăнать.

●Чи юратнă йывăҫĕ чăвашăн юман теҫҫĕ. Ăна вăл пуҫ ҫапнă. Ăна касса пӳрт тунă, урай сарнă. Юман хуппипе кĕпе-йĕм пĕветнĕ. Чи сумлă паттăра та чăваш юман-паттăр тенĕ. Вилсен вăл юман тупăк ăшне кĕрсе выртнă. /25 страница/.

Ку тĕле П.П. айккинчен ҫеҫ туртса хунă. Кирлĕ шухăш тенĕ-ши?

●Атте ятне каласан пире такам хĕр парĕ, хамăр ята каласан пире сысна кĕтĕвĕ те шанас ҫук тенинче П.П. пуплевĕн иккĕмĕш пайне ҫапла улăштарнă: «... качака та парас ҫук», тенĕ.

●30 страницăра «асси чĕпĕ» тенине П.П. «чĕпĕ асси» тесе тӳрлетнĕ. Ҫав страницăрах П.Хусанкай кĕнекери пĕр ҫынна палласа илнĕ, вăл ҫавă, тенĕ. /Икĕ сас палли лартнă/.

●Курите тенине валашка тесе улăштарнă. /64 стр./.

●27 страницăра кĕнеке авторĕ ҫакăн пек шухăш патне ҫитсе тухнă пулнă. Ăна П.П. икĕ енчен те икшер йĕр туса паллă тунă. Автор вăл вырăна икĕ енчен те скобкăсем ăшне хупнă. Акă вăл сыпăк.

«/Кашни литератор ăшĕнчех хăйĕн «редакторĕ» ларать пулас. Литераторсен ҫеҫ те мар-ха, кашни этемĕнех пулма кирлĕ вăл. Ячĕсем ҫеҫ вĕсен урăхла. Пĕрисем ăна ҫын хăйне халăх хушшинче тытма пĕлни теҫҫĕ, теприсемшĕн вăл ăс-тăн, ыттисем тата мĕн те пулин калаҫҫĕ. Вилĕмсĕр Фамусовăн «редакторĕ» ав Марья Алексевна ятлă. «Ах! боже мой! Что станет говорить княгиня Марья Алексевна!» – тет вăл хăраса. Чăн редакторсем пекех, ăшри редакторсем те тĕрлĕрен пулаҫҫĕ: пысăк ăслă, вăтам ăслă, хаяр, йăваш /«либерал»/... Ни пулă, ни какай тенисем те пур-тăр. Тепри тата хăйĕн мĕлкинчен те хăраса тăрать. Вăл ĕнтĕ кашни ҫыннăнах хăйне тайăн пулас. Пупне кура прихучĕ тенешкел.

Ман ăшра та пур ҫав «редактор». Те эпĕ яланах критиксен алли айне лекнĕрен, мана вăл, ăшри «редактор», пĕр саманта та ирĕке ямасть: кашни сăмаха ҫеҫ те мар, кашни чун хусканăвне тĕрĕслесе, ырласа е хурласа, тăрать: кашни шухăша, вăл ҫуралма ĕлкĕрнĕ-ĕлкĕрмен, тытса пăхса пӳрне йĕрĕ хăварать, тараса ҫине перет, тăлласа лартать. Ҫав тери кансĕрлет вăл мана! Мĕнле хăтăлмалла вăл туйăмран, ăшри ыйхăламан куҫран, ҫав куршанакран /хам хăраххăмран/? Акă нимĕҫ философĕ, писателĕ Иоганн Готфрид Гердер мĕн ҫырать:

«Мысль, проходящая десять цензур прежде, нежели достигнет свет, не есть мысль, но подделка святой инквизиции, часто изуродованный, сеченый батожьем, с кляпом во рту узник», – тет.

Хĕрсе ĕҫлеме тытăнсан ҫеҫ ман «редакторăм» пĕр вăхăта кăтăш пулать. Вара эпĕ ҫывăрса кайнă тискер кайăкпа юнашар ларнă пек ĕҫлесе ларатăп. Кирек хăш вăхăтра та вăл мана вăранса хыпса ҫăтма пултарать...

Эпĕ ҫырнисенчен мĕн те пулин лайăхраххи пур пулсан, ăна эпĕ ҫав «редактор» ҫывăрса кайсан ҫырнă»/.

**Хветĕр УЯР.**